28-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945
ИЮЛЬ
14
ШӐМАТКУН
134(6885) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) Обкомӗпе
Шупашкар хула комитечӗн,
ЧАССР Верховный Совечӗн
тата Шупашкар хула
Совечӗн хаҫачӗ

ВКП(б) Чӑваш Обкомӗнче

Хӗрлӗ Ҫартан киле таврӑнакан ҫынсене кӗтсе илме хатӗрленесси ҫинчен

ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ Хӗрлӗ Ҫартан киле таврӑнакан ҫынсене кӗтсе илессине тата вӗсене ӗҫе вырнаҫтарассине организацилеме республикӑра комисси туса унӑн составне ҫирӗплетнӗ. Ҫав комиссие Хӗрлӗ Ҫартан киле таврӑнакан ҫынсене кӗтсе илес тата вӗсене ӗҫе вырнаҫтарас тӗлӗшпе туса ирттермелли мероприятисене палӑртса хума хушнӑ. Парти горкомӗсемпе райкомӗсене ҫартан киле таврӑнакан воинсене кӗтсе илме тата ӗҫе вырнаҫтарма хулари тата районри комиссисем тума хушнӑ.

ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ парти горкомӗсемпе райкомӗсене ҫартан таврӑннисемпе ӗҫҫыннисен тӗлпулӑвӗсене организацилеме хушнӑ, ҫав тӗлпулусенче докладсем, калаҫусем ирттермелле, художествӑллӑ пултарулӑх коллективӗсен выступленийӗсем тумалла. Чугун ҫул станцийӗсенче, пристаньсенче, театрсенче, клубсенче, вулав ҫурчӗсенче ҫартан таврӑнакан воинсене ӑшшӑн саламлакан лозунгсемпе плакатсем ҫакӑнса тӑмалла.

Чӑвашпотребсоюза тата ӗҫҫынни депутачӗсен Шӑмӑршӑ, Хӗрлӗ Чутай, Ҫӗрпӳ, Ишлей, Комсомольски, Чкаловски, Йӗпреҫ, Улатӑр, Калинино, Сӗнтӗр тата Вӑрнар райсовечӗсене ҫартан таврӑнакан воинсем валли район центрӗсенче чайнӑйсем, кӗтсе лармалли пӳлӗмсем организацилеме, ҫав пунктсене хаҫатсем, журналсем, сӗтел ҫинче вылямалли вӑйӑсем (шахматсем, шашкӑсем, доминосем) ҫителӗклӗ пама хушнӑ.

ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ партин Канаш, Улатӑр тата Шупашкӑр горкомӗсене тата горсовет исполкомӗсен председателӗсене киле таврӑнакан ҫар ҫыннисене кӗтсе илме июлӗн 20-мӗшӗнчен кая юлмасӑр хӑйне уйрӑм ҫуртсем уйӑрса хурса, вӗсене йӗркелесе ҫитерме хушнӑ, ҫав ҫуртсенче юридически ыйтусемпе, ҫурт-йӗр ыйтӑвӗсемпе, ҫавӑн пекех тата киле таврӑнакан ҫар ҫыннисене ӗҫе вырнаҫтарас ыйтусемпе справкӑсем паракан сӗтелсем, паспорт сӗтелӗсем, буфетсем, парикмахерскисем, атӑ-пушмакпа тумтир юсамалли мастерскойсем организацилемелле.

Ӗҫҫынни депутачӗсен район Совечӗсен исполкомӗсем киле таврӑнакан ҫар ҫыннисене станцисемпе пристаньсенчен колхоз транспорчӗпе хӑйсен ялне илсе ҫитерес ӗҫе организацилемелле.

ВКП(б) горкомӗсемпе райкомӗсен предприятисемпе учрежденисенче тата совхозсенче ӗҫ вӑйӗ мӗн чухлӗ кирлине, ҫавӑн пекех тата колхозсенче ертсе пыракан ӗҫсенче ӗҫлеме мӗн чухлӗ ҫын кирлине шута илмелле, ҫавна шута илнӗ тӑрӑх вара ҫартан таврӑнакан ҫынсене ӗҫе ямалла.

Фабрикӑсемпе заводсен тата совхозсен директорӗсен пӗччен ҫынсем валли хӑйне уйрӑм пӳлӗмсем-общежитисем организацилемелле, ҫав пӳлӗмсене ҫартан таврӑннӑ ҫынсене вырнаҫтармалла, вӗсене выртса тӑмалли вырӑнсем памалла. ВКП(б) горкомӗсемпе райкомӗсен тата ӗҫҫынни депутачӗсен хуласемпе районсенчи Совечӗсен исполкомӗсем, парти, комсомол тата Совет активне хутшӑнтарса, ҫар ҫыннисен ҫемьисен пурнӑҫ условийӗсене халех тӗрӗслесе тухмалла, ҫав ҫемьесенчен налогсем, ялхуҫалӑх продукчӗсем тӗрӗс илнипе илменнине, вӑл ҫемьесем пенсисемпе пособисене вӑхӑтра тата тӗрӗс илсе тӑнипе тӑманнине тӗрӗслесе тухмалла, асӑрханӑ йӑнӑшсене пурне те ҫийӗнчех тӳрлетмелле. Ҫартан киле таврӑннӑ воинсене хӑйсен ҫуртйӗрӗсене юсама пулӑшмалла.

ВЛКСМ Обкомне ҫартан киле таврӑнакан воинсене кӗтсе илмелли пунктсенче тата хуласемпе район центрӗсенче чайнӑйсемпе кӗтсе лармалли пӳлӗмсенче ӗҫлеме, ҫавӑн пекех тата ҫар ҫыннисен ҫемьисене, кирлӗ пулсан, хватторсемпе хуралтӑсене хӗле валли хатӗрлеме пулӑшма комсомолецсене мобилизацилеме хушнӑ.

Ҫартан киле таврӑнакан ҫынсене мӗнле кӗтсе илни ҫинчен хаҫатсен тӑтӑшах ҫырса тӑмалла.

Железнодорожниксем киле таврӑнакан воинсене чугунҫулсем тӑрӑх куҫарма тытӑннӑ

Ҫулйӗр Халӑх Комиссариачӗн Центральнӑй Военнӑй Отделӗн Начальникӗпе техникӑлла ҫарсен генерал-майорӗпе Белов юлташпа калаҫни

ТАСС корреспонденчӗ Ҫулйӗр Халӑх Комиссариачӗн Центральнӑй Военнӑй Отделӗн Начальникӗпе техникӑлла ҫарсен генерал-майорӗпе Белов юлташпа калаҫса илнӗ. Белов юлташ ҫапла каланӑ:

— Совет Союзӗнчи чугун ҫулсем киле таврӑнакан воинсене куҫарма тытӑнчӗҫ ӗнтӗ.

Чугун ҫул станцийӗсенче кирлӗ ҫӗрте пур тӗлте те воинсем валли апат-ҫимӗҫ пункчӗсем уҫнӑ, вӗсенче иртсе каякан фронтовиксем вӗри апат ҫиме пултараҫҫӗ. Агитаци пункчӗсене нумайлатнӑ, унта Хӗрлӗ Ҫарӑн паттӑр боецӗсем поездсем пырасса кӗтсе тӑнӑ вӑхӑтра хӑйсен вӑхӑтне культурӑллӑ ирттерме пултараҫҫӗ.

Пассажирски поездсенче кашниччех ҫартан таврӑнакан офицерсемпе сержантсем тата салтаксем валли икшер вагон уйӑрса хураҫҫӗ.

Киле таврӑнакан воинсене чылайӗшне санитарнӑй поездсемпе илсе каяҫҫӗ. Ку поездсен вагонӗсене питӗ лайӑх тунӑ. Апат-ҫимӗҫ уйрӑм кухньӑсенче хатӗрлеҫҫӗ. Санитарнӑй поездсен медицина работникӗсем ҫав поездсем ҫине ларнӑ боецсемпе офицерсене пулӑшса пыраҫҫӗ.

Ҫулйӗр Халӑх Комиссарӗ ҫул начальникӗсене Хӗрлӗ Ҫартан таврӑнакан воинсене чугун ҫулсем ҫинче пӗр кӑлтӑксӑр лайӑх пӑхма, вокзал пӳлӗмӗсене таса та лайӑх тытма, санитари тӗлӗшӗнчен пӑхса тӑрассине вӑйлатма хушнӑ.

Киле таврӑнакан воинсен пӗрремӗш эшелонӗсем хӑйсен тӑван хулисене ҫитме пуҫларӗҫ те ӗнтӗ. Ҫапла, июлӗн 12-мӗшӗнче Ленинград хулине икӗ эшелон ҫитнӗ.

Совет Союзӗн железнодорожникӗсем, Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче фронт хушнӑ боевой заданисене чыслӑн пурнӑҫа кӗртсе пынӑскерсем, Хӗрлӗ Ҫартан таврӑнакан ҫӗнтерӳҫӗ-воинсене киле пӗр кӑлтӑксӑр лайӑх куҫарса тӑрас ответлӑ задачӑна та чӑннипех лайӑх пурнӑҫа кӗртме пултарӗҫ. Вӗсем, хӑйсен мӗнпур вӑйне хурса, боецсемпе офицерсене чугун ҫул тӑрӑх хӑйсен тӑван хулисемпе ялӗсене хӑвӑртрах та лайӑхрах ҫитерме тӑрӑшса ӗҫлӗҫ. (ТАСС).

Хӗрлӗ Ҫартан киле таврӑнакан воинсене кӗтсе илме хатӗрленеҫҫӗ

Канашри предприятисемпе учрежденисем Хӗрлӗ Ҫартан киле таврӑнакан паттӑр воинсене кӗтсе илме хатӗрленеҫҫӗ.

Чугунҫул вокзалӗнче вӗсене валли культурӑллӑ та лайӑх канма ятарласа пӳлӗмсем уйӑрнӑ. Вӑл пӳлӗмсенче партипе совет активӗнчен дежурнӑйсем ӗҫлеҫҫӗ. Кунта воинсем валли лекцисемпе докладсем пулаҫҫӗ, кино кӑтартаҫҫӗ. Вокзала тата воинсем валли уйӑрнӑ пӳлӗмсене лозунгсемпе, плакатсемпе илемлетнӗ, унтах тата хаҫат витринисем пур, куҫса ҫӳрекен библиотека пулать тата художествӑллӑ пултарулӑх кружокӗсем выступленисем тума хатӗрленеҫҫӗ.

Вокзалран инҫе мар столовӑй тата медицина пункчӗ ӗҫлет, ӗҫмелли тӗрлӗ шывсем сутакан киоск уҫнӑ.

Хулари тата чугунҫул ҫинчи мунчасене пӗр чарӑнмасӑр ӗҫлемелле тунӑ, санпропусник ӗҫне лайӑхлатнӑ.

Районри колхозсене килекен воинсем валли колхозсем район центрне дежурнӑй лашасем яраҫҫӗ.

Ҫак кунсенче Хӗрлӗ Ҫарӑн паттӑр воинӗсене кӗтсе илме хатӗрленес тӗлӗшпе кунта Хусан чугунҫул управленийӗ чугунҫул ҫинчи тата хулари партипе совет руководителӗсен канашлӑвне ирттернӗ.

Колхозниксен квалификацине хӑпартасси

Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче районри колхоз шкулӗсем ҫӗршер пин полеводсем, животноводсем, бригадирсем, выльӑх-чӗрлӗх фермисен заведующийӗсем, счетоводсем вӗрентсе кӑларнӑ. Кӑҫал пӗр РСФСР-та кӑна колхоз шкулӗсенче 50 пин ҫын ытла вӗренет.

Пӗр ҫул вӗрентекен ялхуҫалӑх шкулӗсем пысӑк квалификациллӗ работниксем хатӗрлеҫҫӗ. Вӑл шкулсене 7 ҫултан кая мар вӗреннӗ колхозниксемпе колхозницӑсене илеҫҫӗ. Ун пек шкулсем пуринчен ытла ялхуҫалӑх аслӑ шкулӗсем, техникумсем, сӑнав станцийӗсем ҫумӗнче уҫӑлаҫҫӗ. Шкул ҫумӗнче вӗренӳпе подсобнӑй хуҫалӑхсем тӑваҫҫӗ. Вӗсенче ялхуҫалӑх инвентарӗ, тракторсем, комбайнсем тата ыттисем те пур. РСФСР-та ҫавӑн пек шкулсем 300-е яхӑн уҫнӑ. Вӗсенче халӗ 24.000 ҫын вӗренет.

Кӗске вӑхӑт хушши вӗренмелли курссенче (икӗ эрнерен пуҫласа 3 уйӑх таран вӗрентекеннисенче) массӑллӑ квалификациллӗ работниксене (уйрӑм культурӑсен специалисчӗсене, яровизаторсене, каучуководсене, дояркӑсене, кролиководсене, пчеловодсене тата ыттисене те) хатӗрлеҫҫӗ. Россия федерацине кӗрекен облаҫсенче, крайсенче тата республикӑсенче ҫавӑн пек курссенче 52.000 колхозник вӗренет. Кӑҫал вӑл курссенчен 930.000 ҫын вӗренсе тухнӑ.

РСФСР-ти пӗр миллиона яхӑн колхозниксемпе колхозницӑсем кружоксенче, семинарсенче вӗреннӗ. Вӗсене унта агрономсем, зоотехниксем, ветеринари врачӗсем тата опытник-колхозниксем вӗрентнӗ. (ТАСС).

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Чӑваш республикинчи колхозниксемпе колхозницӑсене, ялхуҫалӑх, промышленность, культурӑпа искусство работникӗсене орденсемпе тата медальсемпе наградӑласси ҫинчен

(Юлашки. Пуҫламӑшӗ 131, 132 тата 133-мӗш номерсенче).

«ӖҪРЕ ПАЛӐРНӐШӐН» МЕДАЛЬПЕ

38. Петр Леонтьевич **Леонтьева**—Елчӗк районӗнчи Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз бригадирне.

39. Валентин Лукич **Лукина**—Вӑрмар МТС-ӗнчи комсомолецсемпе ҫамрӑксен трактор бригадин бригадирне.

40. Мария Николаевна **Мазовӑна** — Комсомольски районри «Мурат» колхоз бригадирне.

41. Григорий Сергеевич **Мамонтова** — механика, Йӗпреҫ МТС-ӗнчи мастерской заведующине.

42. Григорий Гаврилович **Мардарейкина**—Етӗрне районӗнчи Буденный ячӗпе тӑракан колхоз председательне.

43. Надежда Адреевна **Марковӑна** — Шупашкарти Ленин ячӗпе тӑракан ҫӗвӗ фабрикинчи закройщицӑна.

44. Константин Ксенофонтович **Мартынова**—Елчӗк районӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан колхозри старши конюха.

45. Михаил Иванович **Мельникова**—Чӑваш АССР-ӗнчи Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗн лаша ӗрчетес тӗлӗшпе ӗҫлекен управленин начальникне.

46. Анастасия Филипповна **Мельниковӑна**—Октябрьски районри Шупашкар Ӗсмӗлри колхозри сысна пӑхакана.

47. Зинон Михайлович **Миловидова** — Чӑвашсен государствӑн педагогика институт директорӗн наука тата вӗренӳ пайӗ енӗпе ӗҫлекен заместительне.

48. Николай Петрович **Минеева**—Шупашкарти водосветри электроцех начальникне.

49. Аркадий Александрович **Мирошника**—Чӑваш АССР Совнаркомӗн ялхуҫалӑх тӗлӗшпе ӗҫлекен консультантне.

50. Сергей Иосифович **Митронина** — Канашри ялхуҫалӑх механизацийӗн шкулӗнчи вӗренӳ пайӗн заведующине.

51. Иван Иванович **Михайлова**—Ҫӗмӗрле МТС-ӗнчи комбайнера.

52. Николай Никитич **Мокеева**—Хӗрлӗ Чутай районӗнчи «Совет» колхоз председательне.

53. Николай Максимович **Мосолова** — Куславкка районӗнчи Калинин ячӗпе тӑракан колхоз председательне.

54. Григорий Иванович **Налимова** — Муркаш районӗнчи «Восток» колхоз председательне.

55. Федор Васильевич **Нежнова**—Сурмайдан МТС-ӗнчи трактор бригади бригадирӗн помощникне.

56. Николай Степанович **Немакова** — Ҫӗмӗрле районӗнчи Ленин ячӗпе тӑракан колхозри пахчаҫимӗҫ тӑвакан бригадира.

57. Акулина Николаевна **Николаевӑна** —Комсомольски районри «Трактор» колхозри МТФ заведующине.

58. Александр Николаевич **Николаева**—Вӑрмар районӗнчи «Дружба» колхоз бригадирне.

59. Варвара Николаевна **Николаевӑна** —Канаш хулинчи «Первое мая» артельри токаре.

60. Иван Николаевич **Николаева**—Калинино райҫӗрӗҫ пайӗн заведующине.

61. Илья Кузьмич **Огнева** — Сӗнтӗр районӗнчи Пушкӑртри фельдшер пункчӗн заведующине.

62. Иван Петрович **Овчинникова** — Шупашкар хулинчи табак фабрикинчи пирус тӑвакан цех начальникне.

63. Иван Осипович **Осипова**—Ҫӗмӗрле районӗнчи «Комбайн» колхоз председательне.

64. Алексей Павлович **Павлова**—Тӑвай районӗнчи Киров ячӗпе тӑракан колхозри сысна фермин заведующине.

65. Агафья Павловна **Павловӑна**—Шупашкар хулинчи «Кожупряжь» артельри работницӑна.

66. Зинаида Алексеевна **Павловӑна** — Вӑрнар районӗнчи больница врачне.

67. Марфа Пегаевна **Пегаевӑна**—Шупашкарти ликерпа эрех заводӗнчи эрех тултаракан цех начальникне.

68. Константин Федорович **Поленова**—Канашри пир-авӑр фабрикин цех заведующине.

69. Евдокия Федоровна **Поляковӑна** — Сӗнтӗр районӗнчи «Колос» колхозри ферма заведующине.

70. Михаил Прохорович **Прохорова** — Чӑваш АССР Верховный Совечӗн юридически группӑн заведующине.

71. Анна Ивановна **Рычковӑна**—Шупашкар хулинчи арлакан фабрикӑн заведующине.

72. Степан Петрович **Сазоненкова** — Улатӑр вӑрманпромхозӗнчи вӑрман касакана.

73. Илларион Никифорович **Северова**—Шӑхасан МТС-ӗнчи старши механика.

74. Пелагея Акимовна **Семакинӑна** — Улатӑр районӗнчи «Красная звезда» колхозри ферма заведующине.

75. Кирилл Семенович **Семенова** — Вӑрмар районӗнчи «Большевик» колхоз председательне.

76. Зоя Семеновна **Семеновӑна**—Шупашкар районӗнчи «Первое мая» колхоз бригадирне.

77. Иван Сергеевич **Сергеева**—Шупашкар МТС-ӗнчи тракториста.

78. Клавдия Ивановна **Сергеевӑна** — Куславкка районӗнчи «Правда» колхоз бригадирне.

79. Георгий Осипович **Скворцова**—Ҫӗрпӳ районӗнчи «Чуваш ЦИК» колхоз председательне.

80. Елена Афанасьевна **Смирновӑна**— Ишлей районӗнчи «Гвардия» колхоз председательне.

81. Феодосия Яковлевна **Смирновӑна**— Елчӗк районӗнчи Вӑрӑм Хӑва ял Совет председательне.

82. Екатерина Степановна **Степановӑна**—Октябрьски районри Хуракассинчи фельдшер пункчӗн фельдшерицине.

83. Матрена Степановна **Сушковӑна**— Шупашкар хулинчи тир-сӑран комбинатӗнчи штамповщицӑна.

84. Василий Алексеевич **Тимофеева** — Шӑмӑршӑ районӗнчи «Заря» колхоз председательне.

85. Василий Тимофеевич **Тимофеева**— Куславкка районӗнчи «Правда» колхоз председательне.

86. Александр Титович **Титова**—Чӑваш АССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗн производство управленийӗн начальникне.

87. Иван Васильевич **Троицкие**—Чӑваш АССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссарӗн заместительне.

88. Михаил Филиппович **Тумарева** — Улатӑр районӗнчи Калинин ячӗпе тӑракан колхоз председательне.

89. Илья Федорович **Федорова**—Красноармейски районри Ильич ячӗпе тӑракан колхоз председательне.

90. Михаил Федорович **Федорова**—Чурачӑк районӗнчи «Молодая сила» колхозри сысна пӑхакана.

91. Анна Лаврентьевна **Фроловӑна** — Кувакино районӗнчи апат-ҫимӗҫ комбинатӗнчи цех начальникне.

92. Андрей Яковлевич **Чечнева**—Шупашкар районӗнчи «Осоавиахим» колхоз председательне.

93. Василий Семенович **Шамякина** — Йӗпреҫ районӗнчи «Красный фронтовик» колхозри старши конюха.

94. Анна Семеновна **Щипцовӑна**—Канаш районӗнчи «Красное пламя» колхоз бригадирне.

95. Петр Григорьевич **Яковлева**—Первомайски районри Шурут больницин врачне.

96. София Федоровна **Ястрана**—Элӗк районӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан колхоз председательне.

97. Никанор Андреевич **Ятманова**—Советски райҫӗрӗҫ пайӗн заведующине.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1945 ҫулхи июлӗн 6-мӗшӗ.

Англи профсоюзӗсен делегацийӗ Мускава килни

Июлӗн 12-мӗшӗнче, хура металлургире ӗҫлекен рабочисен профсоюзӗн Центральнӑй Комитечӗ чӗннипе, Англин тимӗр-тӑмӑр тата хурҫӑ промышленноҫӗнче ӗҫлекен рабочисен профсоюзӗн делегацийӗ Мускава ҫитнӗ. Делегаци пуҫлӑхӗ—Англири тимӗр тата хурҫӑ промышленноҫӗнче ӗҫлекенсен профсоюзӗн генеральнӑй секретарӗн заместителӗ Линкольн Эванс. Делегаци членӗсем ҫаксем: профсоюз исполкомӗн членӗсем—производствӑра ӗҫлекен рабочисем Х. Дэвей, И. Робертс, Дж. Б. Линч тата профсоюзӑн районсенчи руководителӗсем Х. Дуглас, Т. Михен, Дж. Уильямс.

Аэродромра хӑнасене ҫаксем хирӗҫ тухса кӗтсе илнӗ: ВЦСПС-ӑн пӗтӗм тӗнчери профсоюзсемпе ҫыхӑнса тӑрас тӗлӗшпе ӗҫлекен отделӗн заведующийӗ М. И. Кузнецов, Хура металлургире ӗҫлекен рабочисен профсоюзӗн Центральнӑй Комитечӗн председателӗ М. Е. Евстратов, Хура металлургин Халӑх Комиссарӗн Заместителӗ А. Г. Шереметьев, ВЦСПС-ӑн ответлӑ работникӗсем, совет пичечӗн представителӗсем. (ТАСС).

А. Н. Радищев ячӗпе уҫнӑ музей 60 ҫул тултарать

Саратов хули варринче, сулхӑн садра, илемлӗ ҫурт ларать. Унта государствӑн А. Н. Радищев ячӗпе уҫнӑ художество музейӗ вырнаҫнӑ. Вӑл Совет Союзӗнчи пысӑк пахалӑхсенчен пӗри шутланать. Музее 1885 ҫулта вырӑссен паллӑ художникӗ А. П. Боголюбов хӑйӗн асламӑшӗн А. Н. Радищевӑн ятне хисеплесе уҫнӑ. Ҫак кунсенче Саратоври организацисем Радищев музейӗ 60 ҫул тултарнине палӑртаҫҫӗ.

Халӗ музей фончӗсенче 9.000 экспоната яхӑн шутланать. «Радищев кӗтесси» текен материалсем питӗ интереслӑ.

(ТАСС).

Ӗҫҫынни депутачӗсен райсовечӗсен исполкомӗсемпе ВКП(б) райкомӗсем тӑратнӑ тӑрӑх, выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли государство планне ӑнӑҫлӑ тултарнӑшӑн тата выльӑх-чӗрлӗх тухӑҫлӑхне ӳстернӗшӗн малта пыракан ҫак колхозсемпе колхозниксене республикӑри ХИСЕП ХӐМИ ҫине кӗртнӗ:

ОКТЯБРЬСКИ РАЙОН ТӐРӐХ:

66. Ентри Пасар ял Советӗнчи **«Новая жизнь» колхоз (председателӗ Е. К. Кузьмин юлташ, ферма заведующийӗ М. С. Семенов юлташ)** выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана майракаллӑ шултӑра выльӑх енӗпе 100 процент, сыснасем енӗпе 125 процент, сурӑхсем енӗпе 110 процент, кайӑк-кӗшӗк енӗпе 100 процент тултарнӑ. Государствӑна ҫулталӑкшӑн аш-какай 115 процент, сӗт 62 процент, ҫӑмарта 66 процент, ҫӑм 100 процент панӑ.

67. **«Красный Октябрь» колхозри** ӑратлӑ лаша фермин заведующийӗ **Я. Н. Печников юлташ** лаша ӗрчетес енӗпе плана 160 процент тултарнӑ. 26 кӗсререн 20 тиха илсе сыхласа хӑварнӑ.

УЛАТӐР РАЙОНӖ ТӐРӐХ:

68. **«Заветы Ильича» колхоз** (председателӗ **Акимов юлташ**) выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана лашасем енӗпе 100 процент, майракаллӑ шултӑра выльӑх енӗпе 100 процент, сурӑхсем енӗпе 155 процент тултарнӑ.

69. **«Путь Ильича» колхоз** (председателӗ **Яблонский юлташ**) выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана лашасем енӗпе 100 процент, майракаллӑ шултӑра выльӑх енӗпе 102 процент, сурӑхсем енӗпе 113 процент тултарнӑ.

70. **«Красная звезда» колхоз** (председателӗ **Ахантьев юлташ**) выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана майракаллӑ шултӑра выльӑх енӗпе 104 процент, сыснасем енӗпе 101 процент, сурӑхсем енӗпе 145 процент тултарнӑ.

„Комсомольская правда“ тата „Пионерская правда“ хаҫатсене СССР орденӗсене пани

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. И. Калинин юлташ «Комсомольская правда» хаҫата 1-мӗш степень Отечественнӑй вӑрҫӑ орденӗ тата «Пионерская правда» хаҫата Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав орденӗ панӑ.

Орденсем панӑ чухне ВЛКСМ Центральный Комитечӗн секретарӗ О. П. Мишакова тата ВЛКСМ Центральный Комитечӗн пропаганда отделӗн заведующийӗн заместителӗ М. И. Котов пулнӑ. «Комсомольская правда» хаҫатӑн редакторӗ Б. С. Бурков хаҫат работникӗсен, ҫамрӑк корреспондентсен тата вулакансен ячӗпе Правительствӑна, партие тата Сталин юлташа аслӑ наградӑшӑн тав тунӑ.

«Пионерская правда» хаҫатӑн ответлӑ редакторӗ В. Г. Губарев та сӑмах тухса каланӑ.

М. И. Калинин юлташ «Комсомольская правда» редакцине тата унпа пӗрле пӗтӗм комсомола, ҫавӑн пекех «Пионерская правда» редакцине, «Пионерская правда» хаҫата вулакан пионерсемпе ачасене Правительствӑн аслӑ наградине илнипе тав тунӑ.

— «Комсомольская правда» хаҫата,—тенӗ вӑл,—саламлама ирӗк парсамӑр.

Эпӗ ӑна, чи малтан, ҫакӑншӑн саламлатӑп: вӑл хӑйӗн ӗҫӗн результачӗсене практикӑра—ҫапӑҫу хирӗсенче, фабрикӑсемпе заводсенче, колхозсемпе совхозсенче—пирӗн ҫамрӑксем хӑйсен Тӑван ҫӗршывне ҫав тери парӑнса ӗҫленинче, вӗсен патриотизмӗ питӗ вӑйлӑ пулнинче, вӗсем социализмлӑ государствӑна, унӑн Правительствине тата халӑхсен ҫулпуҫне Сталин юлташа чун-чӗререн парӑнса тӑнинче курчӗ; ҫаксем яланах, пуриччен ытла йывӑр вӑхӑтсенче, совет ҫамрӑкӗсене пулӑшса пынӑ; иккӗмӗшӗнчен, эпӗ ӑна ҫакӑншӑн саламлатӑп: вӑл хаҫат комсомол руководствинче чылай пысӑк пулӑшу пачӗ, пӗтӗм совет ҫамрӑкӗсене вӗрентсе пычӗ тата ҫамрӑксем умӗнче кӑна мар, пӗтӗм совет халӑхӗ умӗнче пысӑк авторитетлӑ пулса тӑчӗ.

«Пионерская правда» хаҫат та питӗ пысӑк ӗҫ туса ирттерчӗ. Вӑл ӗҫӗн пахалӑхӗ ҫакӑнта: пӗрремӗшӗ, ҫынсем пурнӑҫӑн малтанхи утӑмӗсенченех, ҫамрӑкранах хаҫатсем вулама, обществӑллӑ пурнӑҫпа пурӑнма вӗренеҫҫӗ. Вӗсен ӑсӗ-тӑнӗ ӗлӗкхи пек ӑнсӑртран ӳссе пымасть. Ӗлӗкхи вӑхӑтра этем 40 ҫула ҫитиччченех ним пӗлмесӗр пурӑнма пултарнӑ. 40 ҫула ҫитсен, парти работникӗсем пулӑшнипе е ӑнсӑртран килекен сӑлтавсене пула, сасартӑк тӑна кӗме пултарнӑ. Пионерсем апла мар, вӗсен ӑс-тӑнӗ хуллен тата пӗрмаях аталанса пырать; иккӗмӗшӗнчен, вӗсен ӑс-тӑнӗ анлӑланса пырать тата активлӑ пурнӑҫа хутшӑнас кили ӳссе пырать. Вӗсенчен ҫамрӑкранах пурнӑҫпа йӑлӑхса ҫитнӗ пирки малалла нимӗн те курман ҫынсем пулса ан тӑччӑр, вӗсен активлӑхӗ, пурнӑҫшӑн тӑрӑшни, ӗҫшӗн тӑрӑшни ӳссе пымалла пултӑр. «Пионерская правда» ҫак ӗҫе туса пымалла та ӗнтӗ».

Юлашкинчен, М. И. Калинин юлташ хаҫат работникӗсене ҫав йывӑр, хисеплӗ тата питӗ кирлӗ ӗҫре ӑнӑҫусем тума сӗннӗ.

РСФСР шкулӗсен тава тивӗҫлӗ учителӗсемпе РСФСР тава тивӗҫлӗ врачӗсене хисеплӗ грамотӑсем пани

1945 ҫулхи июлӗн 11-мӗшӗнче, каҫхине 10 сехетре, Шупашкарта, Советсен ҫуртӗнче, РСФСР шкулӗсен тава тивӗҫлӗ учителӗсемпе РСФСР тава тивӗҫлӗ врачӗсене хисеплӗ грамотӑсем пачӗҫ.

Хисеплӗ грамотӑсене РСФСР Верховный Совет Президиум Председателӗн Пӗрремӗш Заместителӗ И. А. Власов юлташ пачӗ.

Халӑха ҫутта кӑларас ӗҫре питех те пысӑк ӗҫсем тунӑшӑн РСФСР шкулӗсен тава тивӗҫлӗ учителӗн хисеплӗ грамотине ҫаксем илчӗҫ: Шупашкарти 1-мӗш номерлӗ вӑтам шкулта ӗҫлекен учительница Елизавета Павловна Александрова, Сӗнтӗр районӗнчи Нискассинчи ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкулта ӗҫлекен учитель Александр Васильевич Васильев, Комсомольски районри Луцковски пуҫламӗш шкулта ӗҫлекен учитель Константин Васильевич Волков, Улатӑрти 7-мӗш номерлӗ вӑтам шкулта ӗҫлекен учительница Мария Ивановна Галкина, Канашри 2-мӗш номерлӗ вӑтам шкулта ӗҫлекен учительница Ирина Петровна Ермошкина, Канаш районӗнчи Аччари ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкулта ӗҫлекен учитель Никандр Николаевич Максимов, Ҫӗмӗрле районӗнчи Мӑн Улхашри вӑтам шкулта ӗҫлекен учительница Ираида Семеновна Павлова тата Улатӑрти 7-мӗш номерлӗ вӑтам шкулта ӗҫлекен учительница Валентина Дмитриевна Распопова.

Халӑх сывлӑхне сыхлас ӗҫре питех те пысӑк ӗҫсем тунӑшӑн РСФСР тава тивӗҫлӗ врачӗн хисеплӗ грамотине республикӑри санитарипе эпидемиологи станцийӗн директорӗ Прокопий Николаевич Журин, республикӑри маляри станцийӗн директорӗ Вина Николаевна Луппова тата Шупашкарти Чӑваш АССР-ӗ 10 ҫул тултарнӑ ятпа тӑракан Поликлиникӑн главнӑй врачӗ Петр Николаевич Осипов юлташсем илчӗҫ.

Хисеплӗ грамотӑсем илнӗ хыҫҫӑн РСФСР шкулӗсен тава тивӗҫлӗ учителӗсем Е. П. Александрова, К. В. Волков, И. С. Павлова тата РСФСР тава тивӗҫлӗ врачӗ П. Н. Осипов юлташсем кӗске сӑмахсем тухса каларӗҫ, вӗсен ӗҫне пысӑка хурса хакланӑшӑн партипе правительствӑна чӗререн тав турӗҫ, Тӑван ҫӗршыв ырлӑхӗшӗн малашне татах та ытларах вӑй хурса ӗҫлеме сӑмах пачӗҫ.

Юлашкинчен РСФСР Верховный Совет Президиум Председателӗн пӗрремӗш Заместителӗ И. А. Власов юлташ саламлӑ сӑмах каларӗ.

— Партипе правительство Сирӗн пархатарлӑ ӗҫе Чӑваш республики 25 ҫул тултарнӑ вӑхӑтра паллӑ турӗҫ,—терӗ И. А. Власов юлташ хисеплӗ грамота илнӗ учительсемпе врачсене.

— Совет шкулӗ ачасене вӗрентес тата пӑхса ӳстерес тӗлӗшпе Отечественнӑй вӑрҫӑ ҫулӗсенче питех те пысӑк ӗҫсем турӗ. Эсир, учительсем, социализмлӑ строительствӑра ӗҫлеме юрӑхлӑ, Тӑван ҫӗршыва чӗререн юратакан ҫамрӑксем пӑхса ӳстереттӗр. Эсир пӑхса ӳстернӗ ҫамрӑксенчен чылайӗшӗсем нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пынӑ вӑрҫӑра паттӑрлӑхпа хӑюлӑх кӑтартса мухтава тухрӗҫ.

Сире РСФСР шкулӗсен тава тивӗҫлӗ учителӗн ятне пани ҫитӗнекен ӑрӑва вӗрентсе воспитани парас ӗҫре Сире малашне татах та пысӑкрах ҫитӗнӳсем тума вӑй патӑр.

Правительствӑн пысӑк наградине пани Чӑваш республикинчи халӑх сывлӑхне сыхлас тӗлӗшпе ӗҫлекен учрежденисен работникӗсем те илчӗҫ. Эсир, врачсем, вӑрҫӑ вӑхӑтне тивӗҫлӗ пек ӗҫлерӗр. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче чир-чӗрсем сарӑлни пулмарӗ. Халӑх сывлӑхне сыхлас тӗлӗшпе ӗҫлекен работниксем ӗҫҫыннисене медицина пулӑшӑвне вӑхӑтра парса тӑчӗҫ, ҫавӑнпа правительство наградине илме тивӗҫлӗ пулчӗҫ.

И. А. Власов юлташ РСФСР шкулӗсен тава тивӗҫлӗ учителӗсемпе РСФСР тава тивӗҫлӗ врачӗсене малашне татах та пысӑкрах ҫитӗнӳсем тума сывлӑх сунчӗ.

Тырпул пухса кӗме хатӗр пулар

Калинино районӗнчи «Правда» колхоз (председателӗ Г. Прохоров юлташ) пысӑках мар, унта пурӗ те икӗ бригада кӑна. Халӗ кашни бригадӑрах тырпул пухса кӗртме хатӗрленеҫҫӗ. Колхозӑн 11 гектар улӑх тата 35 гектар акнӑ курӑксем пур, утӑ ҫулса пухма колхоз пур енчен те тӗплӗн хатӗрленсе тухрӗ. Утӑ ҫулма пултаракан кашни ҫын валли ҫава туптаса хунӑ, 130 лапатка пур. Сенӗксем, кӗреплесем ҫителӗклӗ. Колхоз ҫӗртме сухи туса пӗтернӗ, ҫӗртме пуссине 5.222 лав тислӗк тӑкнӑ. Тырӑ вырма тухиччен тырӑ калчине, пахча-ҫимӗҫе пӗтӗмпех ҫумкурӑкӗнчен тасатнӑ.

Колхозӑн 2 жнейка, 1 лобогрейка пур, вӗсем ӗҫлеме хатӗр. Жнейкӑсемпе курсран вӗренсе тухнӑ С. Константиновпа А. Ананьев юлташсем ӗҫлеҫҫӗ. Колхозӑн икӗ молотилка пур, вӗсене моторпа ӗҫлеттерме юсаса лартнӑ. Авӑн ҫапма ятарласа 2 тонна нефть хатӗрленӗ. Молотилкӑсемпе электромотора витнӗ итем ҫине вырнаҫтарса лартнӑ.

Колхоз ҫителӗклӗ таран вӗрен-пӑявсем, михӗ-шӑналӑксем хатӗрлесе хунӑ. Колхозӑн 12 амбар пур, вӗсенчен 10-шне тасатса дезинфекцилесе хунӑ, икӗ амбарне юсаса пӗтереҫҫӗ. Итемрен кӗрекен тырра виҫсе илме тараса ҫителӗклӗ, вӗсене тӗрӗсленӗ тата кирлӗ вырӑна вырнаҫтарнӑ. Колхозра урапасем ҫителӗклӗ. Колхоз тырпул пухса кӗртме уйрӑм план тунӑ. Ҫав план тӑрӑх, ырашпа кӗрхи тулла 6 кун хушшинче вырса тата капана хывса пӗтермелле. Кашни бригадӑрах опытлӑ ватӑ колхозниксене капан тума уйӑрнӑ. Тырӑ вырма тухнӑ хыҫҫӑн виҫҫӗмӗш кунне ыраш ҫапма тата государствӑна обязательство тӑрӑх тырӑ пама тытӑнаҫҫӗ.

— Кӑҫал пирӗн ыраш та, кӗрхи тулӑ та вайлӑ. Тулӑ кӑҫалхи пек никӑҫан та лайӑх пулман. Кашни гектартан 30 центнер тулӑ илессе шансах тӑратпӑр. Тырӑсене вӑхӑтра тата пӗр тӑкаксӑр пухса кӗртме пур условисем те ҫителӗклӗ,— тет колхоз председателӗ, орденоносец Г. П. Прохоров юлташ.

(Хамӑр корр.).

* * *

Ҫӗрпӳ районӗнчи «13 лет Октября» колхоз тырпул пухса кӗртме япӑх хатӗрленет. Колхозӑн жнейкине юсама та тытӑнман. Урапасем ҫителӗклӗ, анчах та вӗсем ҫурри ытла ҫӗмӗрӗлсе пӗтнӗ. Михӗ-шӑналӑксем, вӗрен-пӑявсем ҫителӗксӗр тата машинӑсене сӗрме мазь та тикӗт те ҫук. Тырӑ хумалли складсене юсаман, дезинфекци туса тасатман.

«13 лет Октября» колхозра тырпул пухса кӗртме лайӑхрах хатӗрленме пур условисем те ҫителӗклӗ. Колхоз председателӗн Клементьевӑн ҫавӑрнӑҫусӑрлӑхӗпе унӑн ӗҫри ответсӑрлӑхне пула кӑна тырпул пухса кӗртме хатӗрленес ӗҫ юлса пырать.

Колхозӑн уйхирӗсенче ҫумкурӑкӗ кашласа ларать. Анчах та ҫак вӑхӑта ҫитсе те ҫум ҫумлама тытӑнман.

Н. СЕРГЕЕВ.

РЕСПУБЛИКӐРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ 1945 ҪУЛХИ ИЮЛӖН 10-мӗшӗ ТӖЛНЕ ҪӖРТМЕ ТӐВАҪ ТАТА ҪУМ ҪУМЛАС ӖҪ МӖНЛЕ ПЫНИНЕ КӐТАРТАКАН

СВОДКА

(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Ҫӗртме тунӑ	Тӗштырӑсем ҫумланӑ	Пахча-ҫимӗҫ ҫумланӑ
Ишлей	102,7	85.1	67.7
Чурачӑк	101,8	85,9	73.2
Вӑрнар	101,7	87,2	98,5
Канаш	101,5	100,0	93,9
Сӗнтӗрвӑрри	100,9	51,5	56,0
Ҫӗрпӳ	100,4	100,0	100,0
Советски	100,3	49,9	74,6
Октябрьски	100,2	60,5	100,0
Сӗнтӗр*)	100,1	68,4	62,0
Етӗрне	100,0	94,8	100,0
Шӑхасан	100,0	80,5	67,0
Муркаш	100,0	58,3	90,0
Елчӗк	99,9	93,7	100,0
Калинино	99,1	64,8	73,0
Красноармейски	99,0	84,7	95,4
Шупашкар	98,3	41,9	77,1
Вӑрмар	94,2	69,9	85,1
Куславкка	93,2	69,0	27,8
Хӗрлӗ Чутай	89,5	100,0	98,0
Элӗк*)	87,8	58,8	33,3
Первомайски	81,8	82,3	100,0
Йӗпреҫ	79,7	89,0	52,8
Ҫӗмӗрле	76,0	38,6	100,0
Тӑвай	72,1	78,4	57,3
Шӑмӑршӑ	70,5	100,0	100,0
Комсомольски	70,4	100,0	100,0
Чкаловски	68,9	75,9	100,0
Улатӑр	51,9	73,4	52,4
Пӑрачкав	50,5	52,7	20,0
Кувакино	22,7	72,9	37,5

*) Июлӗн 5-мӗшӗ тӗлне илнӗ даннӑйсем.

РЕСПУБЛИКӐРИ МТС-сенче 1945 ҪУЛХИ ИЮЛӖН 10-мӗшӗ ТӖЛНЕ КОМБАЙНСЕМПЕ МОЛОТИЛКӐСЕМ ЮСАС ӖҪ МӖНЛЕ ПЫНИНЕ КӐТАРТАКАН

СВОДКА

(процентпа)

МТС-сем	Комбайнсем юсанӑ.	Молотилкӑсем юсанӑ.
Йӗпреҫ	91,6	84,6
Красноармейски	90,0	50,0
Сӗнтӗр	77,7	25,0
Шӑхасан	75,0	80,0
Куславкка	72,7	45,4
Шупашкар	71,4	36,3
Улатӑр	70,0	66,6
Канаш	69,2	—
Ҫӗмӗрле	66,6	33,3
Калинино	57,1	46,1
Хӗрлӗ Чутай	57,1	30,0
Ишлей	55,5	50,0
Комсомольски	53,3	33,3
Вӑрмар	50,0	30,0
Сӗнтӗрвӑрри	50,0	11,1
Елчӗк	34,7	37,5
Чкаловски	30,4	50,0
Сурмайдан	29,4	40,0
Тӑвай	29,4	35,7
Октябрьски	28,5	35,3
Вӑрнар	16,6	25,0
Етӗрне	14,2	—
Ҫӗрпӳ	12,5	44,4
Первомайски	—	—
Элӗк	—	—
Сиява	—	—
Шӑмӑршӑ	—	—
Пӑрачкав	—	—
Кувакино	—	—

Конюхсене ӗҫкунӗ мӗнле тӳлемелле

СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ конюхсене ӗҫшӗн уйрӑм сдельщина тӑрӑх, вӗсем пӑхакан лашасен самӑрлӑхне кура тата вӗсене мӗнле усрани тӑрӑх тӳлеме сӗнчӗҫ. Анчах та чылай колхозсенче конюхсене ӗҫкунӗ ҫырса панӑ чухне вӗсем лашасене мӗнле пӑхнине шута илмеҫҫӗ.

Улатӑр районӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан колхозра конюхсене вӗсен ӗҫӗн пахалӑхӗ тӑрӑх мар, миҫе кун ӗҫленине шута илсе ӗҫкунӗ тӳлеҫҫӗ. Ҫак колхозри конюх Ф. И. Яковлев март уйӑхӗнче 26 кун ӗҫленӗ. Ҫакӑншӑн ӑна 40,65 ӗҫкунӗ, Шувалин конюха вара 31 кун ӗҫленӗшӗн 52 ӗҫкунӗ тӳленӗ. Конюхсене ӗҫшӗн пурне те пӗртан тӳлени лаша пӑхас ӗҫе лайӑхлатма чӑрмантаракан сӑлтавсенчен пӗри пулса тӑрать.

СССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗн инструкцийӗ тӑрӑх, конюхсен ӗҫне уйрӑм сдельщинӑпа хакласа тӳлемелле. Лаша самӑр, таса пулсан, конюха пӗр лаша пӑхнӑшӑн 0,12 ӗҫкунӗ тӳлеҫҫӗ. Лаша самӑрлӑхӗ вӑтам пулсан, конюха кашни лашашӑн 0,09 ӗҫкунӗ, самӑрлӑхӗ начар пулсан татах та сахалтарах тӳлемелле. Пӗтӗ кӗсрене, пӗтӗленни 6 уйӑх иртнӗ хыҫҫӑн тата хӑмласан тихине амӑшӗнчен уйӑриччен пӑхнӑшӑн, кӗсре мӑнтӑр та таса пулсан, конюха кашни кӗсрешӗн кунне 0,17 ӗҫкунӗ, кӗсрен самӑрлӑхӗ вӑтам пулсан—0,12 ӗҫкунӗ, кӗсре ырхан пулсан унтан та сахалтарах тӳлеҫҫӗ. Унсӑр пуҫне, кӗсресене чуптарса пӗтӗлентернӗ пулсан, конюха тата 5 ӗҫкунӗ хушса тӳлеҫҫӗ. Тихасене планпа кӑтартнӑ чухлӗ пӑхса ҫитӗнтерсен кашни тихашӑн конюха 25 ӗҫкунӗ таран тӳлеҫҫӗ.

Сӗнтӗр районӗнчи «Колос» колхозӑн конюхӗ Зоя Алексеева 12 лаша, вӑл шутра 4 кӗсре пӑхать. Халӗ 3 кӗсри хӑмланӑ, пӗри пӗтӗ. Тӗрӗсленӗ чухне Алексеева пӑхакан 4 кӗсре тата 4 ӗҫ лаши самӑрлӑх енчен лайӑх, ытти 4 ӗҫ лаши вӑтам самӑрлӑхлӑ пулнӑ. Алексеева лашасене вӑхӑтра тасатать тата лайӑх пӑхать. Лашасен самӑрлӑхне шута илсе, 1945 ҫулхи апрель уйӑхӗшӗн Алексеева конюха ҫакӑн чухлӗ ӗҫкунӗ тӳленӗ. Тиха ӗмӗртекен 3 кӗсрене тата пӗтӗ пӗр кӗсрене (вӗсем лайӑх самӑрлӑхлӑ) пӑхнӑшӑн кашни куншӑн 0,17-шер ӗҫкунӗ, уйӑха пурӗ 20,40 ӗҫкунӗ, лайӑх самӑрлӑхлӑ 4 ӗҫ лашишӗн 0,12-шер ӗҫкунӗ, пурӗ 14,40 ӗҫкунӗ, вӑтам самӑрлӑхлӑ 4 ӗҫ лашишӗн кашнишӗн 0,09-шер ӗҫкунӗ, пурӗ 10,80 ӗҫкунӗ тӳленӗ. Ҫапла вара Алексеева конюх апрель уйӑхӗшӗн пурӗ 45,60 ӗҫкунӗ ӗҫлесе илнӗ. Сӗнтӗр районӗнчи «Колос» колхозра 1945 ҫулта пӗр лаша та вилмен. Пур лашасем те лайӑх тата вӑтам самӑрлӑхлӑ.

Колхозра лаша ӗрчетес ӗҫӗн заведующийӗн, уйхир ӗҫӗн бригадирӗсемпе пӗрле, кашни уйӑхрах лашасене мӗнле пӑхнине тӗрӗслесе тухмалла, ҫавӑн хыҫҫӑн кӑна конюхсене ӗҫкунӗ тӳлемелле.

Колхозри лаша шутне тихасене пӑхса ҫитӗнтернипе кӑна ӳстерме пулать. Ҫак ӗҫре конюх пысӑк пулӑшу парать. Лашасем чупма кӑмӑлланине асӑрхасси, вӗсене чуптарасси, пӗтӗ кӗсресене лайӑх пӑхасси тата тихасене пӑхса ҫитӗнтересси пӗтӗмпех конюх ӗҫӗнчен килет.

СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗн постановленийӗ тӑрӑх, тиха илнӗшӗн тата вӗсене пӑхса ҫитӗнтернӗшӗн конюха ӗҫкунӗсӗр пуҫне, тӗштырӑ тата ҫамрӑк выльӑх ӗҫкунӗ ҫумне хушса параҫҫӗ. Конюха пӑхма ҫирӗплетсе панӑ кӗсресем пурте пӗтӗленсе юлсан, кашни пӗтӗ кӗсрешӗн 5 килограмм тӗштырӑ тӳлеҫҫӗ. Конюха пӑхма ҫирӗплетсе панӑ 10 кӗсререн 6 тиха илсе вӗсене амӑшӗнчен уйӑраччен пӑхса ҫитӗнтерсен, кашни тихашӑн 15 килограмм тӗштырӑ тӳлеҫҫӗ. 6 тихаран ытларах пӑхса ҫитӗнтерсен, кашни тихашӑн 30 килограмм тӳлемелле. Унсӑр пуҫне, конюх ҫак ӗҫсемшӗнех пӗр пӑру е 4 уйӑха ҫитнӗ 2 путек илет. 10 кӗсререн каярах пӑхакан конюха та ҫав шутранах, мӗн чухлӗ пӑхнине шутласа тӳлеҫҫӗ.

Сӗнтӗр районӗнчи «Колос» колхозрах конюх Вернов юлташ 10 ӗҫ лаши пӑхать, вӗсенчен 6 кӗсре. Вернов пӑхакан ултӑ кӗсрене иртнӗ 1944 ҫулта чуптарса тата пӗтӗлентерсе хӑварнӑ. Вернова ҫавӑншӑн ӗҫкунӗ ҫумне хушса 30 килограмм тӗштырӑ тӳленӗ. Кӑҫал Вернов пӑхакан 6 кӗсри те хӑмланӑ. Вернов юлташ ҫак тихасене амӑшӗсенчен уйӑраччен лайӑх пӑхса ҫитӗнтерсен 4 тихашӑн 15-шер килограмм тата 2 тихашӑн 30-шар килограмм тырӑ илет. Ҫапла вара вӑл пӗтӗмпе 150 килограмм тырӑ илет. Унсӑр пуҫне, Вернов юлташ колхозран пӗр пӑру е 4 уйӑха ҫитнӗ 2 путек илет.

Конюхсем лайӑх ӗҫлесен, кашни тихана пӑхса ҫитӗнтерсен тата кашни кӗсрене чуптарса хӑварсан, ӗҫкунӗ ҫумне хушса тӳлемелли йӗрке тӑрӑх тӗштырӑ илме пултараҫҫӗ.

Колхоз правленийӗсен лаша ӗрчетес ӗҫе лайӑх аталантарса пырас тесен, хушса тӳлемелли закона пӗр пӑркаламасӑр пурнӑҫласа пымалла.

М. МЕЛЬНИКОВ,
Чӑваш АССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗн лаша ӗрчетес енӗпе ӗҫлекен управленийӗн начальникӗ.
М. ОБРУЧНИКОВА,
Чӑваш АССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗн зоотехникӗ.

Чугун ҫул валли—вутӑ

Йӗпреҫ вӑрманпромхозӗн коллективӗ, Вӑрнар вӑрманпромхозӗн коллективӗпе ӑмӑртса ӗҫлесе, II-мӗш кварталта чугун ҫул транспорчӗ валли вутӑ хатӗрлемелли плана ирттерсе тултарчӗ. Июнӗн 30-мӗшӗ тӗлне илсен, кварталти плана касас енӗпе 160 процент, турттарас енӗпе 120 процент тултарнӑ. Ҫавӑн пекех шахтӑсене ҫирӗплетмелли материалсем хатӗрлемелли задание те ӑнӑҫлӑн пурнӑҫланӑ.

Пирӗн вӑрманпромхозра, хамӑрӑн рабочисемсӗр пуҫне, Шупашкар, Ҫӗрпӳ тата Йӗпреҫ районӗсенчен мобилизациленӗ колхозниксемпе колхозницӑсем ӗҫлеҫҫӗ. Хальхи вӑхӑтра Шупашкар районӗнчи колхозниксемпе колхозницӑсем лайӑх ӗҫленине палӑртмалла.

Чӑваш республики 25 ҫул тултарас умӗн пынӑ ӑмӑртура вӑрманта ӗҫлекенсем хайсен ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерчӗҫ. Ҫӗрпӳ районӗнчи «Красные Тиуши» колхоз членӗсем А. Ильин, Ф. Михайлова нормӑпа пӑхнинчен 1,5 хут ытларах вутӑ турттараҫҫӗ. Ҫак районри «Малалла» колхозран пынӑ М. Ильина, А. Романова, Х. Петрова тата О. Чураева, лучковӑй пӑчкӑпа ӗҫлесе, вутӑ касмалли нормӑна 155—175-шер процент тултараҫҫӗ. Шупашкар районӗнчи «Красный флот» колхоз членӗ М. Гаврилов кашни кун 20 кубометр вутӑ турттарса тухать.

П. ФЕДОРОВ,
Вӑрманпромхоз директорӗ.

ӐМӐРТУРА ТУНӐ ҪИТӖНӲ

Шупашкарти промкомбинат коллективӗ республика юбилейӗ умӗнхи социализмлӑ ӑмӑртура ҫитӗнӳ турӗ: июнь уйӑхӗнчи производство планне ӑнӑҫлӑн тултарчӗ.

Цехсем хушшинчи ӑмӑртура тимӗр-тӑмӑр цехӗ мала тухнӑ. Вӑл цех уйӑхри задание 123 процент тултарнӑ. Ҫӑмата йӑвалакан цех та иртнӗ уйӑхра планпа пӑхнинчен нумайрах продукци туса кӑларнӑ.

Чӑваш халӑх уявне лайӑхрах кӗтсе илессишӗн кӗрешсе, комбинатри чылай рабочисемпе работницӑсем хайсен ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерчӗ. Ҫӑмата йӑвалакан цехри М. Агачева, Д. Федосеева, М. Павлова тата А. Андреева работницӑсем уйӑхри нормӑна 1,5 хут ирттерсе тултарнӑ. Тимӗр-тӑмӑр цехӗнчи В. Агеев, Н. Сниткин тата Г. Михайлов мастерсем нормӑран 4—5 хут тухӑҫлӑрах ӗҫленӗ.

Комбинат коллективӗ ҫак уйӑхра та хӑвӑртлӑхсене чакармасӑр ӗҫлет.

Ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулне хатӗрленеҫҫӗ

ШӐХАСАН. Тури Сурӑмри пуҫламӗш шкулта (заведующийӗ П. Федорова юлташ) ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулне лайӑх хатӗрленеҫҫӗ. Халӗ ҫитес вӗренӳ ҫулӗнче 1-мӗш класа вӗренме пымалли ачасене шута илсе тухнӑ. Трахомӑпа чирлӗ ачасене вӗренӳ ҫулӗ пуҫланиччен сыватас тӗлӗшпе ҫине тӑрсах ӗҫлеҫҫӗ. Ашшӗ-амӑшӗсем те хайсен ачисем валли кирлӗ учебниксемпе вӗренӳ хатӗрӗсене туянаҫҫӗ.

Шкул малтанхи уйӑхсенче хутмалӑх вутӑ ҫителӗклӗ хатӗрленӗ. Ҫак кунсенче хӑшпӗр классене юсаса йӗркелеме тытӑнаҫҫӗ. Тӗрлӗрен учебниксемпе вӗренӳ хатӗрӗсене илме ял Совечӗ шкула укҫа ҫителӗклех уйӑрса панӑ.

Ст. АСЛАН.

Францин учредительнӑй пухӑвне суйласси ҫинчен официальнӑй йӗркепе пӗлтерни

ПАРИЖ, июлӗн 10-мӗшӗ. (ТАСС). Министрсен совечӗн ӗнер пулса иртнӗ ларӑвӗ хыҫҫӑн журналистсене информаци министерствинче министрсен совечӗ йышӑннӑ решени ҫинчен официальнӑй йӗркепе пӗлтернӗ. Пӗлтерӳре ҫапла каланӑ:

«Тӗплӗн сӳтсе-явнӑ хыҫҫӑн министрсен совечӗ учредительнӑй пухӑва суйласси ҫинчен тата государство влаҫне вӑхӑтлӑха организацилесси ҫинчен калакан закон проектне йышӑннӑ. Вӑл закон тӑрӑх, учредительнӑй пухӑва пурте сасӑлас йӗркепе суйламалла. Ҫав закона пӑхса тухма халех консультаци ассамблейине тӑратмалла. Учредительнӑй пуху вара вӑхӑтлӑх правительствӑн председательне суйласа лартмалла.

Пулас конституцие пурнӑҫа кӗртиччен государство влаҫне организацилес шутпа вӑхӑтлӑх ӗҫсем тума палӑртса хунӑ.

Учредительнӑй пуху хатӗрленӗ конституцие ҫирӗплетме ӑна халӑх умне тӑратмалла. Ҫав законопроекта ҫирӗплетес тӗлӗшпе халӑх хушшинче референдум туса ирттермелле. Халӑх ӑна йышӑнмасан, учредительнӑй пуху депутатсен палатине туса хурать, вара 1875 ҫулхи конституци тӑрӑх сенат суйлаҫҫӗ».

«ФРАНЦИЕ ҪӖНЕТМЕЛЛИ ГЕНЕРАЛЬНӐЙ ШТАТСЕН» ЛАРӐВӖ УҪАЛНИ

ПАРИЖ, июлӗн 10-мӗшӗ. (ТАСС). Франс пресс агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, паян Парижра Шайо дворецӗнче «Францие ҫӗнетмелли генеральнӑй штатсен» ларӑвӗ уҫӑлнӑ. Унӑн ӗҫӗсем июлӗн 14-мӗшӗччен пымалла. Генеральнӑй штатсем демократиллӗ республикӑна хӳтӗлес ыйтӑва, Францие экономика, социальнӑй тата культура тӗлӗшпе аталантарас ыйтусене сӳтсе-явмалла. Юлашки ларура этемпе гражданинӑн экономика, политика тата социальнӑй прависемпе обязанноҫӗсем ҫинчен деклараци йышӑнмалла.

Генеральнӑй штатсен ӗҫӗсем вӗҫленнӗ хыҫҫӑн, пур делегатсем те йышӑннӑ наказсене вӑхӑтлӑх правительство пуҫлӑхне пама шутлаҫҫӗ.

Президиума халӑх хирӗҫ тӑрса кӗрешекен советӑн ертсе пыракан комитечӗн членӗсене суйланӑ. Генеральнӑй штатсен пӗррӗмӗш ларӑвне уҫса, Луи Сайян 1789 ҫулхи генеральнӑй штатсемпе 1945 ҫулхи генеральнӑй штатсене танлаштарса хальхи генеральнӑй штатсен демократилӗхӗ ытларах пулнине палӑртнӑ. Учредительнӑй пухӑва суйламалли правительство проекчӗ пирки Сайян ҫапла каланӑ: «генеральнӑй штатсен ҫакна кӑтартса памалла: ассамблея пирӗн халӑх никама пӑхӑнманлӑхне упраса хӑварнине палӑртмалла, правительство ассамблея умӗнче ответлӑ пулмалла», тенӗ. Оратор чӑн-чӑн республикӑллӑ ҫар епле вырӑн йышӑнса тӑнине палӑртса хӑварнӑ тата тасату туса ирттерме кирли ҫинчен каласа панӑ.

ФРАНЦИЕ ҪӖНЕТМЕЛЛИ ГЕНЕРАЛЬНӐЙ ШТАТСЕН ИККӖМӖШ ЛАРӐВӖ

ПАРИЖ, июлӗн 12-мӗшӗ. (ТАСС). Франс пресс агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, ӗнер Францие ҫӗнетмелли генеральнӑй штатсен иккӗмӗш ларӑвӗнче ирӗклӗхпе демократие хӳтӗлес ыйту тӑрӑх прениесем пулса иртнӗ.

Ҫак ыйтупа Альбер Байе доклад туса панӑ. Вӑл каланӑ тӑрӑх, халӑх панӑ нумай наказсенче тасату япӑх пынипе пӑшӑрханаҫҫӗ. Петэна халӗ те суд умне тӑратман. Лавале Испани Франци аллине паман-ха. Пуҫлӑхсене мар, иккӗмӗш вырӑн йышӑнса тӑнӑ ҫынсене кӑна хӗнеҫҫӗ. Малалла, тенӗ Байе, наказсенче ирӗклӗхе пӗтерсе хума тӑрӑшнине палӑртаҫҫӗ, вӑл ирӗклӗхе хӑвӑртрах ҫавӑрса илмелле. Наказсене ҫырнӑ ҫынсен тӗп требованийӗсем — Франци революцийӗ вӑхӑтӗнче кӑларса тӑратнӑ этем прависене пурнӑҫа кӗртесси пулать. Оратор трестсене ӗлӗкхи феодалсемпе танлаштарнӑ. Францие ҫӗнетес тесе, наказ ҫыракансем пӗрлӗхлӗ никама пӑхӑнман учредительнӑй пуху пухма ыйтаҫҫӗ. Малалла Байе, администраци реформисене тӑвас тӗлӗшпе наказра палӑртнӑ сӗнӳсем ҫинчен каласа, государствӑн пысӑк вырӑнӗсене буржуйсене кӑна мар, халӑх ывӑлӗсене те лартмалла, нацизмпа расизма тӗппипех пӗтерес тӗлӗшпе наказ ҫыракансем ирӗклӗхе юратакан ҫӗршывсемпе килӗшсе пурӑнма кирлине кӑтартса параҫҫӗ, тенӗ.

Юлашкинчен Байе ҫапла каланӑ: хирӗҫ тӑрса кӗрешекен организацисен нумай представителӗсемпе де Голль генерал хушшинче хальхи вӑхӑтра политикӑллӑ хирӗҫӳсем тухнӑ пулин те, де Голль 1940 ҫулта мӗнле позици йышӑнса тӑнине эпир манмастпӑр, тенӗ.

Чылай ораторсем хыҫҫӑн тухса каланӑ Жак Дюкло правительство консультаци ассамблейин шухӑшӗсене сахал асра тытнипе кӳреннӗ. Францин аслӑ пуласлӑхӗ,—тенӗ вӑл,—демократипе тачӑн ҫыхӑнса тӑрать. Франци аслӑ демократисен—Великобританин, СССР-ӑн тата США-н тусӗ пулса тӑрать. Францире Франкопа Салазарӑн тусӗсем пулас ҫук.

Пренире тухса каланӑ Д'астье, наказсенче тунӑ сӗнӳсене пурнӑҫа кӗртессине сӑнаса тӑма, хирӗҫ тӑрса кӗрешекен халӑх советне полномочи пама ыйтнӑ. Ҫак сӗнӗве йышӑннӑ. Республика хӑрушлӑхра пулас пулсан, хирӗҫ тӑрса кӗрешекен халӑх советне генеральнӑй штатсене пухма хушса хӑварнӑ.

Юлашкинчен Байе резолюци вуласа панӑ, вӑл резолюцие пӗрсаслӑн йышӑннӑ. Ҫав резолюцире наказсенче панӑ сӗнӳсене кӗскен палӑртса хунӑ. Унта ҫаксем ҫинчен каланӑ: тивӗҫлӗ тасату ирттересси, нимӗҫсене пулӑшакансене хирӗҫ кӗрешесси, ирӗклӗх прависене ҫӗнӗрен пурнӑҫа кӗртесси, этем прависене хисеплесси, государство тата государство шкулӗсем чиркӳрен уйӑрӑлса тӑрасси, трестсене пӗтересси, ӗҫхалӑхӗшӗн тивӗҫлӗ социальнӑй реформӑсем тӑвасси тата вӑл реформӑсене колонисемпе протекторатсене ҫитересси, никама пӑхӑнман учредительнӑй пуху пухасси, управленин кивӗ аппаратне ҫӗнетесси ҫинчен каланӑ.

Лӑпкӑ океан ҫинчи вӑрҫӑ

ВАШИНГТОН, июлӗн 10-мӗшӗ. (ТАСС). США-н Лӑпкӑ океанри флочӗн штабӗ ҫапла пӗлтерет: июлӗн 10-мӗшӗнче, тул ҫутӑлса килнӗ вӑхӑтра, авианосецсем ҫинчи самолетсем Токио районне вӗҫсе пырса тапӑннӑ. Ҫав операцие хутшӑннӑ эскадрӑра 4 авианосец, 4 линкор, 4 крейсер тата сахалтан та 14 эсминец пулнӑ.

ЛОНДОН, июлӗн 10-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Токио районне бомбӑсем пӑрахма пуҫланӑранпа 8 сехет иртнӗ хыҫҫӑн та Япони тапӑнма пӑрахман. Ҫав вӑхӑт хушшинче японецсен пӗр самолет та курӑнман. Бомбӑсем пӑрахнӑ объектсем хушшинче Токио районӗнчи 80 аэродром пулнӑ.

ВАШИНГТОН, июлӗн 10-мӗшӗ. (ТАСС). США-н ҫар министерстви ҫапла пӗлтерет: американецсен хӑватлӑран та хӑватлӑ «Вӗҫекен крепость» йышши бомбардировщикӗсен пысӑк соединенийӗсем, Мариан утравӗсем ҫинчен вӗҫсе хӑпарса, июлӗн 10-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле Гифу, Сакаи, Бакаяма, Сендай тата Искаици хулисене (Хонсю утравӗ) тапӑннӑ, вут хыптаракан бомбӑсем пӑрахнӑ.

НЬЮ-ЙОРК, июлӗн 10-мӗшӗ. (ТАСС). Ассошиэйдет пресс агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Хонсю утравне тапӑннӑ ҫӗрте американецсен «Вӗҫекен крепость» йышши хӑватлӑран та хӑватлӑ 500—550 бомбардировщикӗ пулнӑ. Вӗсем 3.500 тонна вут хыптаракан бомбӑсем пӑрахнӑ.

Танжер ыйтӑвӗ пирки

ЛОНДОН, июлӗн 12-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентствин Парижри корреспонденчӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, июлӗн 10-мӗшӗнче каҫхине Англин ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министерстви Францин ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министрне Бидона нота панӑ. Ҫав нотӑра Танжер пирки пухӑнмалли конференцие пуҫтармашкӑн тӑхтама ыйтнӑ. Мӗншӗн тесен Англи правительстви ҫав конференцие Совет Союзне чӗнес ыйтӑва пӑхса тухма ӗлкӗреймен-ха.

Июлӗн 11-мӗшӗнче Францин ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министерстви акӑлчансене хирӗҫ ҫапла ответ панӑ: Франци шутланӑ тӑрӑх, халех экспертсен конференцине пухмалла, ҫав конференци Танжера Франко генерал ярса иличчен пулнӑ пек йӗрке тума хатӗрлесе хумалла, Франци ҫав конференцире совет представителӗсем пулассипе килӗшет. Нотӑра тата ҫапла каланӑ: Танжерта вӑрҫӑ пуҫланиччен пулнӑ йӗркене улӑштарас тесе шутласан, вара пысӑкрах конференци пухас пулать, вӑл конференцире 1906 ҫулта Алжесирасри договора алӑ пуснӑ державӑсем пурте пулмалла.

АФИНЫ ХУЛИНЧИ ФАШИСТЛА МИТИНГ

АФИНЫ, июлӗн 10-мӗшӗ. (ТАСС). Июлӗн 8-мӗшӗнче Афины хулинче «нации ҫамрӑкӗсем» текенсен митингӗ пулса иртнӗ. Митингра хурал батальонӗсен организаторӗ Зонатас, Гервас, Кулумбакис, Грецири хӗҫпӑшаллӑ вӑйсен епископӗ Пантелеймон тата «Х», «Пеан», «Эдес», «Триена» ятлӑ фашистла тата монархистла организацисен членӗсем пулнӑ. Тухса каланисем пурте Совет Союзне, Югославие, Албание тата Болгарие хирӗҫ каланӑ. Метаксасӑн фашистла режимне мухтанӑ.

Ораторсенчен пӗри Пагулатос ҫапла каланӑ: «Грексемпе союзниксен ҫарӗсем Сурҫӗр Эпира халех йышӑнмалла. Союзниксем ҫапла тӑвас темеҫҫӗ пулсан, эпир вӑл ӗҫе хамӑрах тӑвӑпӑр... Монархистла организацисем хӗҫпӑшала тавӑрса пама шутламаҫҫӗ, мӗншӗн тесен шалти тата тулашри тӑшмансемпе хӗҫпӑшал чӗлхипе калаҫма вӑхӑт ҫитрӗ».

Тухса каланӑ чухне трибуна ҫинче тата вырӑнсенчен ҫапла кӑшкӑрнисем илтӗннӗ: «Титона, коммунистсемпе болгарсене вилӗм! Софияпа, Мускава, Белграда тата Тиранӑна илер! Эпиртан пуҫласа Мускава ҫитиччен хӗрлӗ фашизма пӗтерер! Захаридиса вилӗм! Коммунистсене ҫакса вӗлерер! Тӗп пултӑр Варкиз, сывӑ пулччӑр король тата Булгарис!»

Митинга Афины хулинчи радио тӑрӑх панӑ. Пропаганда министрӗ Закинфинос ТАСС корреспонденчӗн ыйтӑвӗсем ҫине ответлесе, ҫак пуху правительство ирӗк панипе пулса иртнине ҫирӗплетнӗ. Закинфинос ҫапла каланӑ: митингра тухса каламалли сӑмахсенче, малтанах ҫырса хурса мана кӑтартнисенче «усалли нимӗн те пулман», тенӗ.

РУМЫНИРЕ ЛЕГИОНЕРСЕН БАНДИНЕ ТЫТСА ХУПНӐ

БУХАРЕСТ, июлӗн 12-мӗшӗ. (ТАСС). «Скынтейя» хаҫат пӗлтернӗ тӑрӑх, Арада хулинче полици органӗсем легионерсен (Румынири фашистсен) бандине тытса хупнӑ. Ҫав банда гитлеровецсемпе легионерсене суя документсем туса парса тӑнӑ. Мӗн пурӗ 5 легионера тытса хупнӑ. Вӗсене легионерсен 1941 ҫулта пулнӑ восстанийӗн участникӗ Каланич ертсе пынӑ, ӑна та тытса хупнӑ. Легионерсене тытса хупас ӗҫ малалла пырать.

БЕЛЬГИ ПОЛЬША ХАЛӐХ ПӖРЛӖХ ПРАВИТЕЛЬСТВИНЕ ЙЫШӐННӐ

БРЮССЕЛЬ, июлӗн 10-мӗшӗ. (ТАСС). Брюссельри радио пӗлтернӗ тӑрӑх, Бельги правительстви Польша Халӑх Пӗрлӗхӗн Правительствине йышӑнса унпала дипломатиллӗ ҫыхӑнусем тытма йышӑннӑ.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Хусанти стоматологи институчӗ 1-мӗш курса вӗренме илет.

Института вӑтам шкултан вӗренсе тухнисене илеҫҫӗ. Отличниксемсӗр пуҫне ыттисен вырӑс чӗлхипе тата литературипе (сӑмахпа каласа тата ҫырса), химипе тата физикӑпа экзамен памалла. Экзаменсем сентябрӗн 1-мӗшӗнче пуҫланаҫҫӗ.

Ытти хуласенчен килекен студентсене пурӑнма вырнаҫтараҫҫӗ. Рабочисен нормипе апат-ҫимӗҫ параҫҫӗ. Стипенди парасси ытти институтсенчи йӗркепех пулать.

Заявленисемпе документсене ҫак адреспа ямалла: гор. Казань, улица Бутлерова, 16.

Наркомгражданстройӑн Чувашстрой трестне Шупашкарта ялан ӗҫлеме ҫакӑн пек работниксем кирлӗ: каменщиксем, бетонщиксем, платниксем, столярсем, штукатурсем, малярсем, кровельщиксем, мотористсем, шоферсем, слесарь-металлистсем, сантехника слесарӗсем, электромонтерсем, грузчиксем тата тӗрлӗ специальноҫсене вӗренме учениксем кирлӗ.

Мӗнпур работниксене чугун ҫул транспортӗнче тата ҫыхӑну ӗҫӗнче ӗҫлекенсемпе пӗртан апат-ҫимӗҫ карточки параҫҫӗ.

Ҫак адреспа ыйтса пӗлмелле: гор. Чебоксары, Красная площадь, д. № 7.

Завода ҫакӑн пек работниксем кирлӗ: инженер-электриксем, техник-электриксем, конструкторсем, метала сивӗлле ӗҫлекен технологсем, экономистсем, бухгалтерсем тата ҫак специальноҫсене пӗлекен рабочисем: токарьсем, револьверщиксем, фрезеровщиксем, слесарь-инструментальщиксем, юсакан слесарьсем, сборщиксем, электромонтерсем, прессовщикем, штамповщиксем, шоферсем, лавҫӑсем, грузчиксем, каменщиксем; платниксем, столярсем, штукатурсем, малярсем тата ыттисем те. Вахтерсем, пушарпа кӗрешекен работниксем, пулӑшакан рабочисем, уборщицӑсем кирлӗ. Строительствӑпа транспорт рабочийӗсене общежитие вырнаҫтараҫҫӗ.

Вӑтам шкултан вӗренсе тухнисене инструкторсем, лаборантсем пулма вӗрентме илеҫҫӗ. Вӗрентнӗ вӑхӑтра уйӑхне 300—400 тенкӗ укҫа тӳлеҫҫӗ, уйрӑм списокри рабочисемпе тан апат-ҫимӗҫ параҫҫӗ.

Ҫак адреспа ыйтса пӗлмелле: г. Чебоксары, ул. Карла-Маркса, 80, Бюро пропусков.

Росглаввинон Шупашкарти эрех комбинатне ялан ӗҫлеме бухгалтерсем, ответлӑ исполнитель, снабженипе сбыт агенчӗсем, кладовщиксем кирлӗ. Ҫак адреспа ыйтса пӗлмелле: гор. Чебоксары, ул. Коммунальная Слобода, 21.

Хусанти С. М. Киров ячӗпе тӑракан химипе технологи институчӗ вӗренме илет.

Института 17 ҫултан пуҫласа 35 ҫула ҫитнӗ ҫынсене, вӑтам шкултан вӗренсе тухнисене илеҫҫӗ. Отличниксемсӗр пуҫне пурин те математикӑпа, физикӑпа, химипе, вырӑс чӗлхипе, литературӑпа, ют ҫӗршыв чӗлхипе экзамен памалла. Экзаменсем сентябрӗн 1-мӗшӗнче пуҫланаҫҫӗ.

Институтра 3 факультет пур: 1) механика факультечӗ, 2) технологи факультечӗ, 3) боеприпас факультечӗ.

Студентсене общежитие вырнаҫтараҫҫӗ, стипенди параҫҫӗ, кунне виҫӗ хут апатлантараҫҫӗ. Институтра столовӑй, подсобнӑй хуҫалӑх, ОРС, парикмахерски, атӑ-пушмак тата тумтир юсакан мастерской пур.

Документсене ҫак адреспа ямалла: гор. Казань, ул. Карла Маркса, 6.

Чӑвашдревпромсоюза Шупашкарта ӗҫлеме ревизи группин руководителӗ тата ревизорсем кирлӗ, артельсенче ӗҫлеме—главнӑй бухгалтерсем, старши бухгалтерсем кирлӗ. Ӗҫ укҫи—калаҫса татӑлнӑ тӑрӑх пулать. Ҫак адреспа ыйтса пӗлмелле: гор. Чебоксары, ул. Заводская, 12.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, заместителӗн — 2—89, секретариатӑн — 4—26, пропаганда пайӗн — 2—89, парти пурнӑҫ пайӗн 3—99, промышленность пайӗн — 3—97, ялхуҫалӑх пайӗн — 3—99, рабселькорсен пайӗн — 0—67, издательство конторин — 0—23.

НТ 00374 Типографи № Управлени полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Зака. №2, ф. 6. 59 42 п. п. Тираж 16.000